26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943 АПРЕЛЬ 17 ШАМАТКУН 82(6319) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва 1942 çулти итогĕсене пăхса тухса, СССР Совнаркомĕ Чăваш республикинчи колхозсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен продуктивноçне ӳстерес ĕçре пысăк çĕнтерӳ тунине палăртрĕ, Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премие памалла турĕ.

Республика çак пысăк çĕнтерĕве хăрушлăх ĕçлесе тума пултарчĕ. Çĕршер колхозниксемпе колхозницăсем выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне çĕклессишĕн, çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç. «Колхозсенче социализмлă выльăх-чĕрлĕх сыхласа хăварассине тата выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли мерăсем çинчен» партипе правительство йышăннă постановленине тĕп вырăна хурса ĕçлесе, пирĕн республика 1942 çулта майракаллă шултăра выльăхсен йышне 40 процент, сыснасен йышне — 29 процент, сурăхсемпе качакасен йышне — 74 процент чухлĕ ӳстерчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, республикăри пĕтĕм ĕççыннисем СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çак постановленине пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулни пирĕн халăха çĕнĕрен пĕтĕм вăйпа ĕçлеме хавхалантарать. СССР Совнаркомĕн постановленине илтсе, Ишлей районĕнчи митинг пулса иртнĕ. Митингра колхозниксемпе колхозницăсем, райцентрти учрежденисенче ĕçлекен служащисемпе руководительсем, МТС работникĕсем пулнă, вĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне иккĕмĕш премие илни çине тĕпе се, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ, тата ялхуçалăх ĕçĕнчи пĕтĕм ĕçсене те тата лайăххăн, хăвăртрах ĕçлеме пулчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе республикăра, иртнĕ çулта пĕрремĕш вырăна тухса Хĕрлĕ ялав илнĕ Ишлей районĕнчи колхозсем, выльăх-чĕрлĕх йышне унăн продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва сарса пырса, 1943 çулăн иртнĕ виçĕ уйăхĕнче пысăк çитĕнӳ турĕç. Виçĕ уйăх хушшинче Ишлей районĕнчи майракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 18 пуç, сысна йышĕ — 287 пуç, сурăхсен йышĕ — 1.261 пуç хутшăннă. Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес ĕçре те пĕр нумай колхозсем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе Элĕк районĕнчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Районри колхозсенче кăçал виçĕ уйăх хушшинче майракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 5,6 процент, сысна йышĕ — 9,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ — 28,6 процент хутшăннă. Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе Элĕк районĕ республикăра пĕр малти вырăнта тăрать.

Сĕнтĕр районĕнчи 1943 çулăн виçĕ уйăхĕ хушшинче выльăх-чĕрлĕхсен хисепне майракаллă шултăра выльăхсен енĕпе 10,6 процент, сыснасен енĕпе 10,1 процент, сурăхсен енĕпе 29,6 процент ӳстерчĕ. Çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл ӳстерессипе татах та çине тăрса ĕçлесе Сĕнтĕр районĕн мала тухма пур майсем те çителĕклĕ пулаççĕ. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Етĕрне, Красноармейски районĕсенчи колхозсем те пысăк пултаруллăхпа ĕçлеççĕ.

Малта пыракан районсенчи колхозсен ĕç опычĕне анлăн усă курса, вĕсемпе танлашса пырса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе республикăри колхозсен, колхозниксемпе колхозницăсен 1943 çулти Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешмелле. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çӳлте тытса, 1943 çулта çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тума пирĕн условисем çителĕклĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри кадрсем ĕç опычĕпе çулран çул пуянланса пыраççĕ, выльăхсене пăхса усрамалли база ӳссе пырать, колхозниксемпе колхозницăсен ĕç лес хаваслăхĕ çĕкленет.

Халĕ республикăри колхозсенче уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç. Колхозсем кăçал çуракине лайăхрах хатĕрленсе çитнипе тухаççĕ. Колхозсем умĕнче тăракан задача — çуракине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ăнăçлăн та пысăк пахалăхпа туса ирттересси, пысăк тухăçлă тырпул туса илесси пулать. 1943 çулти Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пур енĕпе те малти вырăна тухассишĕн пирĕн çине тăрса кĕрешмелле.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Мĕнпур чугунçулсем çинче çарти пек йĕрке тăвасси çинчен

Правительство тĕрлĕ япаласем турттарас тĕлĕшпе панă заданисене чугунçул транспорчĕ тĕрĕс те вăхăтра пурнăçа кĕртни вăрçă условийĕсенче вăрçăпа хуçалăх енĕпе уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Чугунçул транспорчĕн питех те йышлă рабочийĕсемпе служащийĕсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Кунпа пĕрлех чугунçул транспорчĕн хăшпĕр рабочийĕсемпе служащийĕсем, транспорт работникĕсен питех те сахал пайĕ пулса тăраканскерсем, хăйсем дисциплинăсăр пулнине, ĕç çине ответсăр пăхнине кăтартаççĕ тата, çапла майпа, чугунçул транспорчĕн ĕçне дезорганизацилеççĕ.

Чугунçул транспортĕнчи хăшпĕр рабочисемпе служащисем, дисциплинăсăр пулса, фронт валли тĕрлĕ япаласем пĕр чарăнусăр тăратассине сиен кӳнине тата чугунçул транспортĕнчи тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен çынсене тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçа кĕртме чăрмантарнине малашне тӳссе тăма юрамасть.

Çавăнпа та, чугунçул çинчи работниксен дисциплинăсăр тата иртĕнсе кайнă пайĕ транспорт ĕçне, сиен кӳме тата железнодорожниксен чыслăхне варалама ан пултартăр тесе, мĕнпур чугунçулсем çинче çарти пек дисциплина туни кирлĕ, çав дисциплина чугунçул çинчи кашни работнике халăх умĕнчи хăйĕн тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа тата тĕрĕс пурнăçа кĕртме хушмалла.

Чугунçул транспорчĕ çинче çирĕп йĕрке тăвас шутпа тата дисциплинăсăр çынсене çавăрлăхлас шутпа СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Мĕнпур чугунçулсем çинче çарти пек йĕрке тăвас.

2. Чугунçул транспорчĕн мĕнпур рабочийĕсемпе служащийĕсене вăрçă вăхăчĕ валли мобилизациленĕ тесе шутлас тата вĕсене чугунçул транспорчĕ çинче ĕçлеме çирĕплетес.

3. Чугунçул транспорчĕн работникĕсем служкбăра тунă преступленисемшĕн Хĕрлĕ Çарти çынсемпе пĕр танах ответ тытмалла тăвас.

4. Чугунçул транспорчĕ çинче тунă преступленисем çинчен пуçарса янă пур ĕçсене те чугунçул çинчи Çар Трибуналĕсем вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх пăхса тухаççĕ.

5. Чугунçул транспортĕнчи рабочисемпе служащисене службăра преступлени тунăшăн, хытăрах наказани памалла мар пулсан, Çар Трибуналĕ йышăннă тăрăх, ĕçрен кăлармалла та фронта штрафной ротăсене ямалла.

6. Çулйĕр Халăх Комиссарне Каганович юлташа тата чугунçулсен начальникĕсене «Чугунçул транспортĕнчи рабочисемпе служащисен дисциплини çинчен калакан Устава» пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле тума, дисциплинăна пăсакансене çӳлте кăтартнă уставăн 21-мĕш параграфĕ тăрăх кирлĕ чухне администраци енĕпе 20 талăклăха çити арестлессине пурнăçа кĕртмелле тума хушас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1943 çулти апрелĕн 15-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 15-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 14-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груззем турттарса пыракан 40 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул составне аркатнă, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарнă.

* * *

Кубань çинче пĕр соединени чаçĕсем хастарлăн кĕрешнĕ. Вăл участока нимĕçсем пысăк вăй илсе пынă, вĕсен пехотипе 46 танкĕ кăнтăрла иртсен тăтăшах вăйлă контратакăсем тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе пăрахнă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн артиллери нимĕçсене уйрăмах пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллине ытла хисепе илнĕ. Тыткăна илнисем тата трофейăсем пур.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пехотăпа артиллери нимĕçсен 100 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшман пехотин пĕр ротти пирĕн позицие атакăланă. Пысăк çухатусем тӳстерсе, гитлеровецсене малтанхи рубежсем çинех ыватса янă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн подразделенисем вырăнти çапăçусем туса пырса, нимĕçсен 120 салтакĕпе офицерне, 2 орудине тата 8 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Снайпер Ломакин юлташ юлашки кунсенче 8 гитлеровеца вĕлернĕ тата вут тивертекен пульăсемпе тăшманăн боеприпассен 2 складне çунтарса янă. Снайпер Попов юлташ 22 нимĕçе вĕлернĕ, Пухов юлташ — 18 нимĕçе, Черняк юлташ — 15 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севск районĕнче капитан Зубреев ертсе пыракан подразделенин артиллерисчĕсем нимĕçсем йышăннă чугунçул станцийĕ çине вăйлăн персе тăнă. Малтанхи снарядсемех тăшманăн бронепоездне вут тивертнĕ. Кунсăр пуçне, артиллери батарейине тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 80 лава пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче нимĕç пехоти танксем пулăшса пынипе пĕр чаçăн позицийĕсене темиçе хут та атакăланă. Пирĕн подразделенисем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе миноментсенчен персе, гитлеровецсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă, вĕсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Совет артиллерисчĕсем нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, 2 оруди, 4 миномет тата 5 автомашина пĕтерсе тăкнă. Ленинград çывăхĕнче пирĕн летчиксем тата зенитчиксем нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕн разведчикĕсем Минск — Славное чугунçулĕн пĕр участокĕнче ирхине çар поезчĕ иртсе каймалли çинчен пĕлнĕ. Çĕрле партизансем темиçе çĕрте чугунçул çине минăсем лартса тухнă. Ирпеле, тăшман поезчĕ минăсем лартнă участок патне çывхарнă чухне, отряд командирĕ ток панă. Питĕ вăйлă взрыв пулнă. Вагонсем, пĕр-пĕрин çине хăпарса, аялалла сирпĕннĕ. Вагонсенчен сиксе тухма хăтланнă оккупантсене партизансен пулеметчикĕсем тата снайперĕсем пеме пуçланă. Нумай гитлеровеца вĕлернĕ е амантнă. Вара пĕр çухату тумасăрах партизансем каялла кайнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Малый Заход ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç оккупанчĕсем колхоза пĕтĕмпех çаратрĕç, хресченсен апатçимĕçне пĕтĕмпех туртса илнипе вĕсене выçă вилмелле туса хучĕç. Гитлеровецсем пире хăйсен чурисем туса хучĕç. Комендант пурне те хул çине нашивка ĕçлесе е номер çырнă бирка çакса çӳреме хушрĕ. Нимĕçсем колхозниксене пурне те килĕсенчен хăваласа кăларчĕç. Халăх мунчасенче, нӳхрепсенче тата землянкăсенче пурăнчĕ. Пире ирхине ирех пуçласа сĕм çĕрлеччен çулсем тунă çĕрте тата вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеттеретчĕç. Нимĕç бандичĕсем колхозниксемпе колхозницăсене лавсене кӳлсе вĕсен çинче йывăр пĕренесем турттаратчĕç. Оккупаци вăхăтĕнче тӳсме çук йывăр ĕçленипе тата выçăпа ялта 250 çын ытла вилчĕ. Каялла чакнă чухне нимĕçсем яла вут тĕртрĕç. 16 кил çунса кайрĕ, ыттисене вутран упраса хăвартăмăр». Акт çине çаксем алă пуснă: Шумилоборски ялсовет депутачĕ Хазова, Малый Заход ялĕн çыннисем — Данилова, Терентьева тата ыттисем те.

Нимĕçсен фашистла палачĕсен ирсĕр элекĕсем

Геббельсăн суеçисем юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче, 1940 çулти çуркунне Смоленск районĕнче совет органĕсем Польша офицерĕсене массăллăн персе вĕлернĕ тесе, ирсĕр элексем сараççĕ. Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсен çак çĕнĕ те ирсĕр элекĕнче çавтери ултавлă та тискер суя умĕнче те чарăнса тăмаççĕ, çак элекпе вĕсем, халĕ паллăрнă тăрăх, хăйсем тунă калама çук тискер преступленисене пытарса хăварма хăтланаççĕ.

Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем, 1941 çулта Смоленскран хĕвеланăçнерехри районсенче строительство ĕçĕсенче пулнăскерсем, совет чылай çыннисемпе тата Смоленск облаçĕнче пурăнакансемпе пĕрле 1941 çулти çулла, совет войскисем Смоленск районĕнчен тухса кайнă хыççăн, нимĕçсен фашистла палачĕсен аллине лекнĕскерсем, хурлăхлă кунçул тӳссе ирттерни пирки нимĕç фашисчĕсен çак пĕлтерĕвĕсем хыççăн нимĕнле иккĕленӳ те юлмасть.

Çакăн пирки нимĕн иккĕленмелли те çук: Геббельсăн суеçисем, элеклесе тата тĕрлĕ суя хыпарсем шухăшласа кăларса, халĕ гитлерла вăрăхурахсен юнлă та тискер ĕçĕсене шăлса лартма хăтланаççĕ. Нимĕçсем Смоленск патĕнче виле шăтăкĕсем нумай тупса палăртни çинчен кăнттамăн суйса кăтартса, геббельсла суеçĕсем Гнездовая ялне аса илеççĕ, анчах вĕсем шăпах ĕнтĕ Гнездовая ялĕ çывăхĕнче историри «Гнездовая масарне» археологсем чавса пăхни пуррине жуликла мансса хăвараççĕ. Çав ĕçсен гитлерла мастерĕсем фактсене питех те пăсса тата пăтратса кăтартма хăтланаççĕ, советăн 1940 çулти çуркуннехи темĕнле тискер ĕçĕсем çинчен суя хыпарсем сараççĕ тата, çапла вара, гитлеровецсем тунă тискер ĕçсемшĕн ответ тытассине хăйсем çинчен сирсе яма тăрăшаççĕ.

Айăпсăр çĕршер пин çыннăн юнĕпе хăйсен аллисене варалана, хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха, хĕрарăмсемпе ачасене те, старриксене те шеллемесĕр, тăтăшах пĕтерсе пыракан, Польшăра хăйĕнче те нумай çĕршер пин граждансене вĕлерсе пĕтернĕ фашистла çынçиенсем хăйсен ирсĕр суйнипе тата элекĕпе никама та ултала пултараймĕç. Гитлерла çынвĕлеренсем хăйсен юнлă преступленийĕсемшĕн пурпĕрех тата тĕрĕссипе наказани илессинчен хăтăлаймĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет самолечĕсем Данцигпа Кенигсберг хулисене тапăнни

Апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле совет самолечĕсем Данциг тата Кенигсберг хулисем çине вĕçсе пырса, çав хуласенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула Данцигра нумай çĕрте пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă. Пит вăйлă пушарсемпе взрывсем нефть склачĕсен районĕнче пулнă. Кенигсбергра гавань тата товарнăй станци районĕнче вăйлă пушарсем тухнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ХРОНИКА

Вăрçă хыççăнхи апат-çимĕç ыйтăвĕсемпе США-ра пулакан пĕрлешӳллĕ нацисен конференцине кайма СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ делегаци уйăрса хунă, унта çаксем кĕреççĕ: А. Д. Крутиков юлташ (делегаци председателĕ), В. Ф. Старченко, В. С. Немчинов, Г. Ф. Сакоин, Д. Д. Мишустин тата П. И. Щегул.

ШУПАШКАР ХУЛИ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарьне ЧАРЫКОВА, Совнарком председательне МАТВЕЕВА, Çĕрĕç Халăх Комиссарне МАЛОВА.

ССР Союзĕн Наркомземĕ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе çĕрĕç оргăнĕсен работникĕсене, республика руководителĕсене 1942 çулта паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартнăшăн пысăк награда — Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми илнĕ ятпа ырă сунса саламлать.

Сирĕн республикăри МТС-семпе колхозсен, правительство сирĕн ĕçе пысăка хурса хакланипе хавхаланса, кăçалхи çул государствăн ялхуçалăх ĕçĕсен планне тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çине тăрсах пурнăçа кĕртес, мĕнпур ĕçсене пысăк пахалăхпа туса ирттерес, тăван çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем татах та ытларах парас тесе, мĕн кирлине пурне те тумалла.

Аслă полководец Сталин юлташ фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай, сĕт-çу, çăм тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах туса пама кăтартса панине пурнăçа кĕртессишĕн колхозниксемпе колхозницăсем, çĕрĕç работникĕсем мĕн кирлине пурне те тăвĕç тесе, ССР Союзĕн Наркомземĕ шанса тăрать.

Сывă пултăр пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар!

Сывă пулччăр колхоз хресченĕсем!

Сывă пултăр пирĕн генийлĕ çулпуç тата полководец юратнă Сталин!

ССР Союзĕн Наркомземĕ **БЕНЕДИКТОВ.**

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Колхозсенчи вăрлăх участокĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: колхоз правленийĕсемпе çĕрĕç органĕсем, çавăн пекех тата районри партипе совет организацийĕсем вăрлăх участокĕсенче вăрлăх паха тĕштырă туса илес ĕç çине тимсĕррĕн пăхнă пирки, республикăри нумай колхозсем хăйсен акма юрăхсăр вăрлăхĕсене çулсерен государство склачĕсенчен е ытти колхозсенчен массăллăн улăштарса улăштара илеççĕ. Çавна пула колхозсем хуçалăхра пысăк тăкаксем тӳсеççĕ тата государствăна йывăрлăх кӳреççĕ. Сортлă паха вăрлăх акса тăвас ĕç çине Чкаловски, Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Куславкка районĕсем уйрăмах тимсĕррĕн çаврăнса пăхаççĕ. Çав районсенчи нумай колхозсенче вăрлăх участокĕсене е пачах та уйăрман, е уйăрнă пулсан та вĕсене вăрлăх акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеносем çумне çирĕплетмен. Çавна пула вăрлăх участокĕсене пăхса тăрас ĕçре обезличка пур, колхозсем начар тырпул туса илнĕ е сортлă вăрлăхсене сортлă мар вăрлăхсемпе пăтраштарса янă. Чкаловски, Канаш, Пăрачкав тата ытти районсенчи колхозсенче вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тĕштырăсене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх вăрлăх фончĕсене хывма тивĕçлĕскерсене, государство поставки тата натуроплата шучĕпе Заготзернона леçе-леçе панă, çапла вара колхозсем лайăх вăрлăхсăр тăрса юлнă.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсенчи вăрлăх участокĕсенче вăрлăх акса тăвас ĕçе ертсе пымасть, вăрлăх участокĕсене шута илсе пымасть, вĕсем мĕнле пахалăхлă пулнине тĕрĕслесе тăмасть тата çак йĕркене хакламаннине хирĕç кĕрешмест.

Вăрлăх акса тăвас ĕçе лайăхлатас тата колхозсен вăрлăх участокĕсенче вăрлăх акса тăвас ĕçе йĕркелес шутпа, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнна:

1. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене колхозсенче вăрлăх акса тăвас ĕçе тĕпренех лайăхлатма тата 1943 çулта кашни колхозрах сортлă вăрлăх çителĕклĕ таранах акса тума, çапла вара 1943 çулхи кĕркуннерен пуçласа вăрлăхсем улăштарса илессине пĕтерме хушас.

2. Колхоз правленийĕсене, райисполкомсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене çакна ăнлантарса парас: СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсенче кондицисĕр вăрлăхсене Заготзерно тата Госсортфонд склачĕсенчен 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕччен улăштарса пама Наркомзага юлашки хут ирĕк панă.

3. Райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене тата колхоз правленийĕсене уйхир ĕçĕсем пуçланиччен кашни колхозра вăрлăх участокĕсем çакăн чухлĕ виçепе уйăрса хума сĕнес: çурхи тулă, хуратул тата пăрça-ясмăк культурисем тăрăх çав культурăсем акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен 15 процент чухлĕ, сĕлĕпе урпа валли 13 процент, вир валли 7 процент, ырашпа кĕрхи тулă валли 12 процент, çĕрулми валли 15 процент, йĕтĕн валли 50 процент тата кантăр валли 35 процент уйăрса хăвармалла. Вăрлăх участокĕсем уйăрса панине кашни колхозра тивĕçлĕ актсем çырса, çав участоксене шалчасем лартса паллă туса йĕркелесе хăвармалла.

4. Вăрлăх участокĕсем валли чи лайăх çĕрсене, çĕртме сухи лайăх тунă, çумкуракĕсемсĕр çĕрсене, кĕрхи çĕртмене вăхăтра та тарăн сухаласа хăварнă çĕрсене уйăрса хăвармалла. Вăрлăх участокĕсене иккĕмĕш класран кая мар тăракан сортлă вăрлăхсемпе тата кашни культурăна унччен малтан лайăх культура акнă вырăна акса хăвармалла.

5. Пур колхозсенче те уйхир бригадисен составĕнчен чи опытлăрах колхозниксене уйăрса, вăрлăх акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеносем тумалла. Колхозсенче вăрлăх участокĕсене пăхса тăрассине правлени членĕсенчен пĕрин çине хумалла, çав çынсем вăрлăх участокĕсен заведующийĕсем пулса тăраççĕ.

Колхозсене çапла тума сĕнес: вăрлăх участокĕсен заведующийĕсене, тĕп ĕçшĕн тӳленисĕр пуçне, вăрлăх участокĕсем çинче мĕн чухлĕ тырпул туса илнине кура ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх хушса тӳлемелле.

6. МТС директорĕсене, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене тата колхоз правленийĕсене вăрлăх участокĕсенче агротехникăллă çакăн пек мероприятисене пурнăçа кĕртме хушас:

а) ирхи çуртыррисем акма палăртса кĕрхи çĕртме туса хăварнă участоксене уйхир ĕçĕсен малтанхи икĕ-виçĕ кунĕнче сӳрелесе пăрахмалла, çавăн пекех тата акас умĕн культиваци тумалла, кирлĕ пулсан, кĕрхи çĕртме тунă çĕре тепĕр хут та сухаласа сӳрелеме юрать. Кĕрхи çĕртме çителĕксĕр тунă пулсан, çуркуннехи сухана уйхир ĕçĕсен малтанхи кунĕсенче вăхăтлă тарăн сухаласа сӳрелемелле;

б) вăрлăхлăх акмалли участоксем çине кирлĕ таран вырăнти удобрени (кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, тислĕк, тислĕк шĕвекĕ, фекали) тăкмалла;

в) вăрлăх участокĕсене кая хăвармасăр, пуриччен малтан акса хăвармалла;

г) çуллахи вăхăтра вăрлăх участокĕсене кирлĕ таран çумламалла, калчасене çумкурăкĕсенчен тата ытти культурăсен калчийĕсенчен тасатмалла.

7. Вăрлăх участокĕсенчи тырпула тĕшши çителĕклĕ пулса çитсен вырса илмелле, çав тырпула вырса илессипе çапса пуçтарассине агротехникăн чи лайăх срокĕсенче туса ирттермелле.

8. Вăрлăх участокĕсенчен вырса илнĕ тырпула çапнă хыççăн çийĕнчех сăвăрса тасатмалла, сортировка витĕр кăлармалла, виçсе акт тăрăх, сохраннăй расписка çырса склада хывмалла. Вăрлăхлăх тĕштырăсене пăхса усрама ятарласа уйрăм амбарсем уйăрмалла.

9. Райсовет исполкомĕсене вăрлăх участокĕсене мĕнле акса, çитĕнтерсе тата пухса кĕртни çинчен Совнаркома 1943 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне отчетсем тăратма хушас

Çуракине ăнăçлăн туса иртттерсе вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварар!

Тивĕççĕр васкаса, агротехникăна пăсаççĕ

Хăвăрт акас тĕллевпе çеç ытте-реллесе, Калинино районĕнчи чылай колхозсенче çураки агротехникине пăсаççĕ. Тăпра çитнине çитменнине пăхса тăмасăрах, Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхоз 27 гектар çине сĕлĕ акнă. Çĕртме тунă вырăнсенче 20 гектар ытла сĕлĕ акнă та çиелтен йывăç [illegible] çĕрелле. Тăпра чĕрĕ, пылчăклă пулнă. Çĕрелени усси пулман, сĕлĕ пĕрчисем тăпрапа витĕнсе юлман. Çак йăнăша колхоз председателĕ Н. Герасимов хăй те асăрханă, анчах çав-çавах йăнăша тĕрлетмен. Буденный ячĕпе тăракан колхозра сухаласшăн те 10—11 сантиметр тарăнăш кăна сухалаççĕ.

Çураки агротехникине пăсни Буденный ячĕпе тăракан колхозра çеç мар. Кивçурт Мăрагри «Красная звезда» колхозăх илер (председателĕ Ф. Изосимов юлташ). Колхоз кĕрхи çĕртме тунă вырăна 13 гектар сĕлĕ акнăранна 3—4 кун иртнĕ, анчах халĕ те çак культиваци туса витсе хуман. Пырă тăпра çийĕнчех выртать. Унта халь лашапа пырса кĕме те май çук.

Колхоз председателĕсем Герасимов, Изосимов юлташсем çуракине çакăн пек ăнăх тунăшăн ответлă пулнине туймаççĕ. Сăкăт [illegible] Осипов председателĕ [illegible] çураки ĕçĕсене [illegible] пулать.

Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхозра та çав йăнăшсенех тăваççĕ. Колхоз апрелĕн 13—14-мĕшĕнчех кĕрхи çĕртме тунă вырăнсенчи çине 20 гектара çити сĕлĕ акнă, анчах [illegible] чех-ха. — Халь унта пырса кĕме май çук, типсен çурелĕпĕр-ха, — тет Николаев юлташ.

Чалăм Кăкшăмри Сталин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Иванов) апрелĕн 11-мĕшĕнче çăмăр витĕр 17 гектар сĕлĕ акнă. Акассине тăпра пулса çитнине çитменнине шута илмесĕр акнă. Çырма хĕррине акнă 7 гектар тухăç сĕлĕ паянхи кун та тăпра çийĕнчех. Ку вырăнта тĕллĕн-тĕллĕн юр та ирĕлсе пĕтмен.

Районра çакăн пек тĕслĕхсем тата та пур. Вĕсене коммунистсем ертсе пыракан колхозсенче те курма пулать. Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Николаев) 60 гектар çине сĕлĕ акнă, анчах паянхи куна çитсе те акнă тырă тăпра çийĕнчех выртать, кураксем, шăнкăрчсем тата ытти кайăксем акнă тырра васкасах усă курассĕ.

Çураки агротехникине пăсса туни тырпул тухăçлăхне чакарать. Хăвăртлăхсемшĕн кăна хыпăнса, çураки агротехникине [illegible] туни колхоза, государствăна сиен кÿрет.

ВКП(б) Калинино райкомĕпе колхозсен председателĕсене çакăнтан, хăйсене валли [illegible] ла.

С. ШАДИН. (Хăмăр корр.).

30 колхоз çуракине тухрĕç

ЕЛЧĔК. апрелĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Малаллă тăпнă участоксене суйласа илсе, районри 30 колхоз çураки ĕçĕсене туса пуçларĕç. Ворошилов, Крупская, Тимирязев ячĕсемпе тăракан тата «МОПР», «Красный вопн» колхозсем уйрăм участоксене çине тырă акаççĕ. Паянхи куна пурĕ 23 гектар сĕлĕ тата 10 гектар вика акнă. Ытти колхозсем кĕрхи çĕртме çине тунă вырăнсене культиваци тулаççĕ, иртерех типнĕ вырăнсене сухалаççĕ.

Çуркуннехи ĕçсене колхозниксем пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ. Тăпрана ăшăх сухалани е кирлĕ пек [illegible] тĕслĕхсем халь пачах çук. Пĕтĕм ĕçе пысăк ответлăхпа тума кирлине колхозниксем çирĕп ăнланаççĕ.

Колхоз правленийĕсем çуракине ĕçлекенсем валли столовăйсем уçрĕç. Чылай колхозсенче бригадăсенчи стена хаçачĕсем тухаççĕ.

И. Степанов.

Колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ

СЕНТЕР. Ильинка ялсоветĕнчи «Краснофлотец» колхоз 1943 çулхи çуракине иртттерме, пĕтĕмĕшпе илсен, тахçанах хатĕрленсе çитнĕ. Анчах апрель уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пулса иртнĕ тĕрĕслÿ ĕçре хăшпĕр çитменлĕхсем пуррине палăртса пачĕ. Колхозниксем тĕрĕслÿ комиссийĕ кăтартса панă çитменлĕхсене, çийĕнчех пĕтерме тăрăшрĕç.

Çак кунсенче колхозра колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта колхозниксем çуракине ăнăçлăн туса иртттерме тĕплĕн хатĕрленсе çитнине, комисси кăтартса панă çитменлĕхсене епле пĕтернине пăхса тухрĕç. Колхозăн акма 5 центнер кантăр вăрри çитмен, çуракине тухма урапасем юсавлă пулман тата ачасен яслине уçма çурт хатĕрлесе çитерсмен пулнă. Çак çитменлĕхсене пĕтерсе колхоз правленийĕ колхозниксенчен кивсенле 5 центнер кантăр вăрри пухрĕ, урапасене юсаттарчĕ, ясли валли çурт тупса хатĕрлерĕ.

Халĕ ĕнтĕ колхоз çуракине тухма пур енĕпе те хатĕр. Пур вăрлăхсем те çителĕклĕ, çĕрулми вăрлăхне сортласа, лартма хатĕрлесе хунă, çуракин ĕç планне тунă, бригадăсемпе звеносем организациленĕ, ĕç вăйне вырнаçтарса тухнă.

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç. Колхоз клевер акса пĕтерчĕ тата кĕрхи тырăсем çине удобренисем хучĕ.

А. Смирнова.

Вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлет

КАНАШ. Анаткас Уçырмари вулав çуртне комсомолка А. Иванова ертсе пырать. Вăл хăйне шанса панă ĕçе аван туса пырать. Ăна ялапах вулав çуртĕнче курма пулать. Вулавçăсене кирлĕ кĕнекесене тупса пама тăрăшать. Кунта 3.000 кĕнекене яхăн. Кĕнеке илсе вулакансен шучĕ те пысăк. Вулав çурчĕ вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлет. **И. М.**

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

МТС-ри коммунистсем çураки умĕн

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Машинно-тракторнăй станцинчи пуçламĕш парторганизаци юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Халĕ тракторсен паркне пĕтĕмпех юсаса çитерне. Капитальнăй ремонт тумалли плана 150 процент тултарнă. Ялхуçалăх машинисемпе тракторсем валли запаслă пайсем вырăнтах туса хатĕрлемелли плана 260 процент тултарнă.

Хĕрачасен коммунист Новиков ертсе пыракан трактор бригади тракторсене чи малтан юсаса лартрĕ. Çак бригадăри Юманова, Митюкова комсомолкăсем вăхăта шута илмесĕр ĕçлерĕç, хăйсен примерĕпе ытти трактористкăсене хавхалантарса пычĕç. Халĕ вĕсем колхозсен уйхирĕсене тухса кайма хатĕр тăраççĕ. Вĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче НАТИ тракторпа 800 гектартан кая мар, горючие 10 процентран кая мар перекетлеме обязательствăсем илчĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксен трактор бригадине партин пуçламĕш организаци секретарĕн заместителĕ Асеинов юлташ ертсе пырать. Унăн бригади ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартать.

Халĕ комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕç пуçланчĕ.

МТС-ри рабочисем, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кулленхи нормăна 2—3 хут иртттерсе тултараççĕ. Çамрăк коммунист Трофимов юлташ комбайнсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăна ертсе пырать.

Бригада халĕ комбайнсен 8 моторне юсанă. Комбайнсене юсанă çĕрте ВКП(б) членĕ Наумова юлташ кулленхи плана 135—140 процент тултарса пырать. Слесарь Левин юлташ та тухăçлăн ĕçлет. Уйрăмах комсомолец Илларионов юлташăн ĕçне хакламалла. Вăл хăй 16 çулта анчах пулин те иртнĕ çулта комбайнер помощникĕ пулса ĕçлесе, 300 гектар çинчи тырра аван пухса кĕртрĕ. Хĕллехи вăхăтра слесарь ĕçне вĕренсе, вăл 24 радиатор турĕ.

Партин МТС-ри пуçламĕш организацийĕ производство ĕçĕсене конкретно ертсе пырать. Трактористсемпе трактористкăсене çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Анчах комбайнерсене хатĕрлесе çитереймен-ха.

Партин пуçламĕш организацийĕ МТС-ри работниксем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе аван организациленĕ. Коммунистсем вĕсем хушшинче калаçусем, докладсем туса иртттереççĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, партипе правительствăн постановленийĕсене вăхăтра вуласа ăнлантарса параççĕ. Стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать.

Партиллĕ-политикăллă ĕçе аван йĕркелени парти ретне ÿстерме пулăшрĕ. Юлашки вăхăтра кăна парти ретне çĕнĕрен 12 çынна илнĕ.

В. АНДРЕЕВ

Парти историне тимлĕн вĕренмелле

КАЛИНИНО. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйсен идейăллă-политикăллă пĕлÿлĕхне ÿстерессишĕн ВКП(б) членĕн кандидачĕсем Л. Иванова, З. Степанов, Т. Белов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăйсен пĕлĕвне анлăлатас тесе, вĕсем Маркс—Энгельс —Ленин — Сталин произведенийĕсене вĕренме тытăннă.

ВКП(б) историне хăй тĕллĕн вĕренекен çамрăк коммунистсене парткабинет консультацисем тата семинарсем туса пулăшать. ВКП(б) историне хăй тĕллĕн вĕренекен çамрăк коммунистсене пулăшас енĕпе Алгазино, Шĕнер, Ямбахтино, Юнтапа тата Мăн Явăшри пуçламĕш парторганизацисенче (5 çĕрте) кружоксем ĕçлеме тытăннă.

Анчах хăшпĕр коммунистсем парти историне вĕренес ĕçе хакламаççĕ. А. Данилова, Я. Сулимов тата С. Семенова юлташсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» алла та тытса пăхман. Консультацисемпе семинарсене йĕркеллĕ çÿремеççĕ.

Коммунистсен парти историне сине тăрсах вĕренмелле.

Г. Матвеев.

Шкулсенчи пĕлÿ тĕрĕслевĕ умĕн

Примерлă класс

КАНАШ. Н. А. Добролюбов ячĕпе тăракан педагогика училищи çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевне хĕрсе хатĕрленет.

III-мĕш «Д» класс — чи аван классенчен пĕри пулса тăрать. Унта 20 ача вĕренет. Вĕсем пурте вĕренме çÿреççĕ, ĕлкĕрсе пыраççĕ. Ку класра вĕренекенсен çурри «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренет, кашни вĕренекен педагогика училищине ăнăçлăн пĕтерессишĕн кĕрешет.

Отличницăсем Лаврова, Куприянова, Капитонова, Язвова юлташсем вĕренÿре ыттисене пулăшса пыраççĕ, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Лаврова юлташ училищĕре кăларакан «За педагогические кадры» стена хаçачĕн редакторĕ пулса тăрать. Хаçат вĕренÿ ĕçĕнчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене анлăн çутатса пырать. **И. Максимов.**

Хаçат-журналсемпе çырусене хăвăрт çÿретме тăрăшмаççĕ

КАЛИНИНО. Почтăра ĕçлекенсем хушшинче ĕç дисциплинине тивĕçлипе йĕркелесе яман. Çырусене ответлăха туйса валеçмеççĕ. Вĕсем урайĕнче сапаланса выртнине, вĕсене çÿпĕпе пĕрле тула кăларса тăкнине курма пулать.

Çавăн пекех, лаша çук тесе, часах çĕнĕ хаçат-журналсемпе çырусене Вăрнартан вăхăтра турттарса килмеççĕ. Çитменнине тата вĕсене район центрĕнчи письмоносец У. Константинова тĕрлĕ сăлтавсем тупса подписчиксем патне вăхăтра çитермест.

Б. Шорников.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕн пĕлтерĕвĕнче апрелĕн 14-мĕшĕнче союзниксен войскисем Тунис фронтĕнчи нумай участоксенче малалла куçса пыни çинчен каланă. Франци войскисем Энфидавилльрен хĕвеланăçнерехре сăртлă районра малалла куçса пыраççĕ. Англин пĕрремĕш çарĕ Меджез—Эль-Бабран çурçĕртерехре наступлени туса пырса, куçма йывăр районта паллă позицие йышăнса илнĕ. Марет линийĕ çине наступлени пуçласа янăран вара союзниксем 30.000 çын ытла тыткăна илнĕ. 8-мĕш армин чаçĕсем Энфидавилль районĕнче тăшманпа çапăçаççĕ.

Алжирти радио апрелĕн 14-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Роммель армийĕ Габесран чакма пуçланăран вара хăйĕн çыннисем шутĕнчен тата çар пурлăхĕ шутĕнчен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне çухатнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци войскисем хĕссе пынипе пула нимĕçсем Джебель — Мансуртан тухса кайнă (вăл пункт Поль-дю-Фасран 10 миля кăнтăр хĕвеланăçнерехре тăрать).

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Энфидавилль хыçĕнче тата Энфидавилльрен 17 миля хĕвеланăçнерех тăракан Джебебина хыçĕнче противникăн кайри чаçĕсен позицине шăтарса тухнă. Вăл пунктсем иккĕшĕ те Тунисран 50 миля кăнтăртарахра тăраççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИПЕ ИТАЛИЯ СИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерствин пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ тăшманăн çар тата машиностроени промышленноçĕн чи пысăк центрĕсенчен пĕри пулса тăракан Штутгарта (Германия) çав тери хаяррăн пырса тапăннă.

Апрелĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировочнăй авиацин самолечĕсем Сурçĕр Италири Специя ятлă тинĕс-çар базине вăйлăн пырса тапăннă. «Дейли геральд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Специе тапăннă çĕрте 300 ытла бомбардировщик пулнă.

ГРЕЦИРЕ ПУКАНЕЛЛЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО УЛШĂННĂ

СТАМБУЛ, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче оккупациллĕ влаçсем «премьер-министр» Логофетопулос ертсе пыракан пуканелле правительствăна улăштарнă. Çакна ĕнтĕ Логофетопулос «правительстви», ун умĕнхи Чолакоглу «правительстви» пекех, çĕршывра ÿссе пыракан патриотла юхăма пусарма пултарайман пирки тунă. Нимĕçсем Греци халăхне ирĕксĕр ĕçлеттерме Германие илсе кайма хăтланни çĕршыва питĕ тарăхтарнă, çавна пула патриотла юхăм çĕнĕрен ÿссе кайнă. Грецин никама пăхăнманлăх кунĕнче — мартăн 25-мĕшĕнче — çав кун умĕн массăллăн арестленине пăхмасăрах, Афинăра тата Пирейра оккупантсемпе «правительствăна» хирĕç нумай йышлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

НОРВЕГИ ХАЛĂХĔН ПĔРЛĔХНЕ ПАЛĂРТНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 9-мĕшĕнче, Норвегие нимĕçсем оккупациленĕрен вара 3 çул тултарнă кун, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе хăйсен пĕрлĕхне Норвеги патриочĕсем тĕрлĕ майпа кăтартнă. Вăрттăн ĕçлекен патриотла организацисем çав кун çитиччен нумай малтан Норвеги халăхне апрелĕн 9-мĕшĕнче нимĕç оккупацине хирĕç протестлесе урама тухмасăр тăма чĕннĕ. Илнĕ хыпарсем тăрăх, çав пĕтĕм халăх протестне хуласемпе ялсенчи халăхăн 99 проценчĕ хутшăннă. Апрелĕн 9-мĕшĕнче Осло хулин тата Норвегири ытти хуласен урамĕсем пуш-пушах пулнă. Урамсем тăрăх нимĕç патрулĕсем тата Квислинг штурмовикĕсем çеç утса çÿренĕ.

Вăрттăн ĕçлекен радиостанцисем Норвеги королĕ Хокон тата премьер-министр Нюгорсволд Лондонра тухса каланисене итленĕ.

«ТОТАЛЬНĂЙ МОБИЛИЗАЦИЕ» ХИРĔÇ ТĂНИ ПИРКИ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ШИКЛЕНЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăх фашистсене хирĕç тăни, вăл шутрах гитлеровецсем иртттерекен «тотальнăй мобилизацие» хирĕç тăни фашистла пичете питĕ пăшăрхантарать. «Дас Шварце Кор» ятлă гитлерла хаçат «хальхи вăхăт хушшинчен тĕрлĕ эгоистла сăлтавсемпе пăрăнма хăтланакансене» пурне те хытă хĕстерессипе хăратать. «Йĕркесĕрлĕхсене юратакан çынсене пурне те хĕстерме кирлине хаçат уйрăмах палăртать.

Тем тери вăйлă террор тунине пăхмасăрах, оккупациленĕ çĕршывсенчи халăх гитлеровецсем тăвакан «йĕркене» хирĕç тăнине фашистла хаçатăн йышăнма тивнĕ. «Голландецсем, норвежецсем тата французсем ирĕккĕнех çĕнĕ йĕрке ялавĕ айне тăма васкаççĕ тесе шутланă пулсан, эпир юсанма пултарайман идеалистсем пулнă пулăттăмăр»,—тесе çырать хаçат. «Дас Шварце Кор» хаçат Германире хăйĕнче те нумайĕшĕ «çĕнĕ йĕрке» ялавĕ айне тăма хатĕр мар пулнипе хытă тарăхать.

Май уявĕ умĕн докладсемпе калаçусем тумалли

ТЕМĂСЕМ

1. Майăн пĕрремĕшĕ — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен рабочи класăн вăйĕсене пăхса тухмалли кун.

2. Хĕрлĕ Çарăн хĕллехи кампанийĕн итогĕсем тата совет халăхĕн тăшмана аркатса тăкассишĕн пыракан кĕрешÿри задачисем.

3. Пирĕн хушăра йăваш чунлăх, тимсĕрлĕх тата лăпкăлăх валли вырăн пулмалла мар.

4. Социализмлă ăмăрту — фронта пулăшмалли вăйлă çăлкуçĕ.

5. Çуракине ăнăçлăн иртттерсе, 1943 çулта вăрçă вăхăтĕнчи пек вăйлă тырпул туса илер.

6. Ирĕке кăларнă районсемпе хуласенчи промышленноçпа ялхуçалăхне хăвăртрах юсаса çитерер.

7. Фашистла нимĕç оккупанчĕсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ совет районĕсенче тунă тискер ĕçсем.

8. Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсем гитлерла тиранне хирĕç кĕрешни.

9. Ленин — Сталин партийĕ — Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсен организаторĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ.

Çураки тата агитаципе пропаганда ĕçĕн задачисем

Кăçал социализмлă ялхуçалăхĕ умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Пирĕн тырпул тухăçлăхне ÿстермелле, çавăн пекех ялхуçалăх продукчĕсем, уйрăмах апат-çимĕç продукчĕсем тăвассине иртнĕ çулсенчен танлаштарсан чылай ÿстермелле.

Нумай пулмасть ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли план çинчен постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени вăл партипе совет организацисен тата пĕтĕм колхоз хресченĕсен боевой программи пулса тăрать.

Задача планпа çирĕплетсе панă çĕр лаптăкне акса хăвараççинче кăна мар, çурхи уйхир ĕçĕсене агротехника хушнă пек, пысăк пахалăхпа тăвассинче пулса тăрать. Çурхи ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса иртттерни тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте çĕнĕ çитĕнÿсем тума май парать.

Пирĕн республика иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Пĕлтĕр эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Çак ĕçшĕн СССР Совнаркомĕ пирĕн республикăпа Оборонăн Государственнăй комитечĕн Хĕрлĕ ялавне пачĕ. Кăçал пирĕн тата лайăхрах ĕçлемелле.

Колхозниксене çураки ĕçĕсене тума организацилени уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, вăл çураки ăнăçлăхне татса парать.

Вăрçă колхозсен ĕçне йывăрлатрĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуркунне пирĕн колхозсем умне кăçалхи ялхуçалăх çулне иртттерес тĕлĕшпе ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Ялсенче ĕç вăйĕ сахалланчĕ. Пĕлтĕр колхозсем, колхозниксем пысăк çĕкленÿпе ĕçленине пула тата ĕçе тĕрĕс организациленипе, республика вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерчĕ, уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса иртттерчĕ, акăнакан çĕр лаптăкне аслăлатрĕ, мирлĕ вăхăтринчен тухăçлăрах тырпул туса илчĕ.

Кăçал йывăрлăхсем пĕлтĕрхинчен ытларах пулĕç. Çавăнпа çынсене ĕçе организацилесси те халиччен хинчен пысăкрах вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе конкретлăн ертсе пыни: ĕç тата туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухни, уйра ĕçлекенсене ĕç условийĕсем туса пани кирлĕ.

Çак ответлă задачăсене колхозсенче массăллă-политикăллă ĕçе анлăн туса пымасăр пурнăça кĕртме çук. Партипе совет организацийĕсен, партире тăракан тата партире тăман кашни большевикăн, кашни агитаторăн задачи — колхозлă ялти политикăллă тата производствăллă çĕкленĕве пуçарса ертсе пырасси, колхоз уйхирĕсенче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярасси, колхозлă ялăн стахановецĕсен ĕç опытне ыттисем хушшинче сарасси, колхозниксен массисене вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилесси пулса тăрать. Ялти агитаторсемшĕн, унти мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхоз активĕсемшĕн халĕ ялти ĕççыннисене çуракине кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа иртттерес çĕре мобилизацилессинчен кирлĕрех тата ответлăрах задача урăх çук.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче çураки вăхăтĕнче массăллă-политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе туса иртттересси çинчен постановлени йышăнчĕ. Унта çураки вăхăтĕнче массăллă-политикăллă ĕçе мĕнле туса иртттермеллине уççăн кăтартса панă.

Партипе комсомол организацийĕсен, ялти агитаторсен тата мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсен çураки вăхăтĕнче колхозниксемпе трактористсем хушшинче массăллă-политикăллă тата культурăллă ĕçсене анлăн туса пымалла. Çав ĕçсенче Сталин юлташ вăрçă кунĕсенче тухса каланă сăмахсене тата ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли план çинчен йышăннă постановлене тĕп никĕсе хумалла.

Мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене тата партире тăман активă уйрăм бригадăсемпе участоксене çирĕплетмелле, вĕсем унта массăллă-политикăллă ĕçе туса иртттермелле. Çураки вăхăтĕнче агитаци ĕçне уйра ĕçлекенсем хушшинче туса пымалла. Агитаторсем колхозниксемпе пĕрле ĕçлемелле, каннă вăхăтра агитаци ĕçне пуçăнмалла.

Агитаторсен колхозниксемпе трактористсем хушшинче кулленех политикăллă калаçусем иртттермелле, хаçатсем тата Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа памалла, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлармалла, кăтарту хăмисем, хаçат витринисем организацилемелле, çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа иртттерме чĕнекен лозунгсемпе плакатсем çырса çыпăçтармалла. Большевикла чăн сăмаха масса хушшине çитерсе, ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарасси — агитаторсен хисеплĕ задачи пулса тăрать. Анчах агитаторăн хăйĕн ытти çынсемшĕн примерлă пулмалла. Вăл бригадăра, звенора колхозниксемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçарса яраканĕ тата ăна ертсе пыраканĕ пултăр.

Хаçатсене уйра ĕçлекенсем патне вăхăтра çитернине агитаторсен тĕрĕслесе тăмалла, вĕсем ялсовет исполкомĕсемпе колхоз правленисенче уçăсăр ан выртчăр. Вулав çурчĕсен кусса çÿрекен библиотекăсем организацилемелле, унта çĕнĕ кĕнекесем пулччăр, каннă вăхăтра агитатор вĕсене колхозниксемпе трактористсене вуласа пама пултартăр.

Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче тĕрлĕ кружоксен выступленийĕсене, юрăпа ташă ăстисен выступленийĕсене организацилеме тата Союзкинохроникăн журналĕсене кăтартма пулать.

Пропагандистсен, лекторсен тата докладчиксен вăйĕпе колхозниксемпе трактористсем валли çарпа политика темисем тăрăх тата отечественнăй аслă вăрçăн хальхи вăхăчĕпе тĕнчери лару-тăру çинчен тăтăшах лекцисемпе докладсем иртттермелле.

Колхозниксемпе трактористсене çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла: вĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени, çурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн иртттерсе вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварни — тăшмана татăклăн çĕнтерес сехете сывхартать. Çурхи уйхир ĕçĕсенчен пăрăнакансем тата ĕçе ÿрĕк-сÿрĕк тăвакансем хальхи вăхăтшăн сиенлĕ ĕç тунине колхозниксене ăнлантарса памалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе вĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен ялти агитаторсене кулленех большевикла ертсе пымалла, вĕсене ĕçре пулăшса пымалла. Ку çеç те мар, парти райкомĕсенче ĕçлекенсен колхозниксем хушшинче политикăллă ĕçе хăйсен те туса пырас пулать. Вĕсен колхоз активне, партипе комсомол организацийĕсене вырăна тухса пулăшас пулать.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешÿ колхоз уйхирĕсенче те пырать. Ĕç ăнăçлăхне хирте ĕçлекен кашни колхозник, колхозница, тракторист, плугарь, сеяльщик татса парать.

Массăллă-политикăллă ĕç колхоз уйхирĕнче ĕçлекен кашни çынна вăйлă тырпулшăн кĕрешме, фронта активлăн пулăшса тăма çĕклесе хавхалантартăр.

М. АНДРЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Апрелĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа майăн 18-мĕшне çитиччен кăçал Чăваш республикинче шыври, вăрманти тата шурлăхри кайăк-кĕшĕксене тытма юрамасть.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи госохотинспекци.

Шупашкарти макарон фабрики юрăхлă лодкăсем сутăн илесшĕн.

Сутас текенсен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Урицкий урамĕ, 29, Макарон фабрики, снабжени пайĕ.

Шупашкар хулинчи 2-мĕш участокри халăх судне техничка-рассыльная кирлĕ.

Канцеляри çумĕнче хваттер пур.

Шупашкарти макарон фабрикине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: механик, электромонтер, кочегарсем печниксем, снабжени начальникĕ.

Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Фабрикăра столовăй, апат-çимĕç лавккĕ тата общежити пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 29, Макарон фабрики, кадрсен пайĕ.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—09, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 144 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.